# Стихи о чувашском языке=Чăваш чĕлхине сăвапласа: сăвăсем

## О чувашском языке: стихотворения


- Канаш А. Тăван чĕлхене: Сăвă
- Лукин А. Чĕлхем, тăван чĕлхем: Сăвă
- Назул А. Тăван çĕршыв, тăван чĕлхе: Сăвă
- Митта В. «Тăван чĕлхем! Таса хĕлхем...»: Сăвă
- Петров-Вирьял Ю. Чăваш чĕлхи: Сăвă
- Сандров Н. Тăван чĕлхе: С ăвă
- Сементер Ю. Чăваш чĕлхине сăвапласа кĕвĕленĕ кĕлĕ: Сăвă
- Сеспель М. Чăваш чĕлхи: Сăвă = Чувашский язык: Стихотворение
- Тимбай А. Тăван чĕлхе: Сăвă
- Титова О. Чăваш чĕлхи: Сăвă
- Ухсай Я. Чăваш чĕлхи: Сăвă
- Туркай В. Чăваш чĕлхи: Сăвă
- Хусанкай П. Тăван чĕлхе: Сăвă = Родной язык: Стихотворение
- Федорова Л. Тăван чĕлхем: Сăвă
- Чичканов П. Тăван чĕлхе: Сăвă
- Эндип В. «Тăван чĕлхе, эс – вĕçĕмсĕр тĕнче...»: Сăвă
- Юман А. Тăван чĕлхе: Сăвă
- Ялгир П. Чăвашсем, чăмăртанăр!: Сăвă


---

### Канаш А. Тăван чĕлхене

Тăван чĕлхене
Шанатпăр!..
**Çеçпĕл Мишши**

Çепĕççĕн, сулмаклăн,
Савăккăн, хăватлăн
Янăратăн эсĕ, ман тăван чĕлхем.
Тимĕре тататăн,
Чул сăрта вататăн,
Сÿннĕ вучахра та эс чĕртен хĕлхем!
Савнă ялăмра-и,
Шавлă хулара-и
Сан сассун йыхравĕ пуçтарать пире.
Атăлăн – Мускавăн
Илтĕнен мухтавлан, –
Çитмĕл çичĕ халăх саламлать: хитре!
Венăра тăрать-и,
Берлинра утать-и
Ирĕклĕх салтакĕ,
чыслăха туйса, –
Туслă чĕлхесенĕн
Хушшинче, кервенĕн,
Сас паратăн эс те, кăмала уçса.
Ĕмĕрсем пиĕ
Халăхăн илемĕ,
Кунсерен çекле эс иксĕлми вăйна!
Чăвашлах хавассăн
Калаçать Некрасов,
Пушкин та, Шекспир та йышăнчĕç сана!
Хăшпĕр каппайланнă,
Çын тивĕçне маннă
Йăхсăр-хурăнташсăр каçăр сăмсасем
Сан пирки, мăнаçлăн,
Кăрккасем калаçнăн,
Павăраç пулин те, шанчăксăр, тесе,
Эп сана шанатăп,

### Лукин А. Чĕлхем, тăван чĕлхем

Чĕлхем, тăван чĕлхем,
Эс пуртанах – чунра
Çиçет шевле-хĕлхем,
Чупать вăй-хал юнра.
Сĕм вăрмана тухсан
Туяп: кашла-кашла
Йывăçĕсем тасан
Юрлаççĕ чăвашла.
Çуралнă ялăмра
Çунатлă чĕлхепе
Пуплет яштак йăмра
Çумри çĕмĕртлĕхпе.
Выл хĕррине ансан,
Сар хĕрсемпе ташлă, –
Кунта йăлтах ансат,
Кунта йăлт пакăшла!
Çÿçе – çинçе çилхе –
Çилпе сиккеленет.
Чĕлхем, чечен чĕлхем
Çулçа сирсе çÿрет.
Сăр хĕрринчен ларса
Тухам-и Атăла,
Ашра вут кăларса,
Анам анаталла.
Вуншар чĕлхе юрри
Вĕçет тÿпенелле.
Чăваш кĕвви пурри
Чуна çĕклет епле!
Шур акăш – пăрахут –
Çитсен Шупашкара,
Сас пачĕ: ту-ту-тут! –
Тус-тантăшсем умра.
Тĕп хулари хĕрсем
Манман-ха чăвашла...
Эппин, чĕлхем, хĕрсем,
Вут-кайăкăн вашлат!

Эп кĕтсех тăратăп:
Килĕ Улăп-ывăл – Горькие юлташ.
Вăл сана чап кÿрĕ,
Тĕнчипех вăл çÿрĕ –
Мирпеле канашăн юрăçи – Чăваш!
1952

*Канаш, А. Тăван чĕлхене / А. Канаш //А. Канаш Сăвăсем. – Шупашкар, 1960. – С. 30-31.*

...Тĕнчемĕр уçлăхне
Сассу çитет пулсан,
Чĕлхем, ху хĕлхемне
Сÿнтермĕн эс нихçан!

*Лукин, А. Чĕлхем, тăван чĕлхем / А. Лукин // А. Лукин. Ан манăр. – Шупашкар, 1990. – С. 48-49.*

| Оглавление |

---

## Назул А. Тăван çĕршыв, тăван чĕлхе

Тăван çĕршыв, тăван чĕлхе
Пысăк çĕршывсем тĕнчере нумай.
Анчах чи пысăкки вăл – Тăван çĕршыв.
Ан тив, лаптăкăшĕ хăй тем териех мар
пулин те...
Тăван çĕршыв – яланах пысăк.
Аслă халăхсем тĕнчере самай.
Анчах чи асли вăл – тăван халăх.
Ан тив, йышĕпелен хăй тем териех мар
пулин те...
Тăван халăх – яланах аслă.
Вăйлă чĕлхесем тĕнчере пайтах.
Анчах чи вăйли вăл – тăван чĕлхе.
Ан тив, калăпăшĕ хăй тем териех мар
пулин те...
Тăван чĕлхе – яланах вăйлă.
Шăкăл-шăкăл тăсăлать-и калаçу, çаврăм-
çаврăм янăрать-и юрă
е çемĕн- çемĕн шăнкăртатса юхать-и юмах:
Ку вăл пĕтĕмпех – тăван чĕлхе.
Тĕнчерĕ чĕрчĕнăн, çĕр çинчи мĕнпур
ÿсентăранăн,
тÿпери мĕнпур çăлтăрăн ячĕ пур пирĕн:
Ку вăл пĕтĕмпех – тăван чĕлхе.
çутçанталăк пулăмĕсене, кÿршĕ-аршăн
шухăш-кăмăлне, ырăпа
усала ĕмĕртенех пит лайăх чухланă эпир:
Ку вăл пĕтĕмпех – тăван чĕлхе.
Вăрçа-харçа тиркенĕ, чире-чĕре сиплеме
пĕлнĕ, сăваплăха
мухтанă, ирĕксĕрлĕхе курайман:
Ку вăл пĕтĕмпех – тăван чĕлхе.
Пин-пин сăмахăмăр пур пирĕн,
пин-пин юмахăмăр пур пирĕн,
пин-пин юррăмăр пур пирĕн:
Ку вăл пĕтĕмпех – тăван чĕлхе.
çĕр çул мар, пин те мар, темиçе пин çул
янăранă ĕнтĕ
чăваш чĕлхи.
Анчах – пĕрре те кивелмен.
Пачах-ха, вăл йăм-йăм хĕмпе çиçсе тăракан
çăлтăр пекех çап-çутă.
Шурăмпуç çăлтăрĕ пекех çутă вăл, ялтăр
çутă!
çĕр çухрăм мар, пин те мар, темиçе пин
çухрăм хутланă хăй
ĕмĕрĕн чăваш чĕлхи.
Анчах – пĕрре те мăкалман.

## Митта В. «Тăван чĕлхем! Таса хĕлхем...»

Тăван чĕлхем! Таса хĕлхем
Парсам пăлхавлă чунăма.
Пĕр чăнлăх, савăнăç, илем,
Пар ирĕк – çутăрах çунма.
Ĕшеннисемшĕн çул çинче
Эс – шанчăк çăлтăрĕ ялан.
Тискер тăманлă каçсенче
Йыхравлă чан пек янăран.
Çунат паратăн çамрăка,
Ватта чун канăçĕ кÿрен.
Сÿнсе кĕлленнĕ кăмрăка
Вуткайăк сывлашĕ кĕртен.
Хыпса çунан çĕршывăма,
Чĕлхем, сипетлĕ çумăр яр.
Хĕвел хĕм патăр сывлăма
Мала та пĕр тумлам сыптар.
Сĕткенÿпе шăварăнса,
Шаланкă евĕр çĕкленем.
Çÿлте çуйхавлăн ярăнса,
Этемшĕн савăнăç чĕнем.
Çÿресе çинçелмен çÿрен ут...
Лар, савни, вĕçтерер пĕрех хут!
Ытарса илемлĕ чечен ир,
Куçпала виçейми çеçенхир...
Лар часрах! Аш вăркать, ăш çунать...
Кукалет – çул ыйтать çилçунат.
Эреветлĕ чаршав пĕлĕтсем
Уçăлайччăр эпир вĕçнĕçем.
Шăпăрне çухăртса, çил ачи
Чуптăр пирĕнпеле катаччи.
Туссан тус лайăхрах, çил-тăман!
Ирĕк, ирĕк!..
Тăван, мĕн тăвам?
Янкăс чун ямшăкла кăтăрса,
Е ярам-и ши-ши шăхăрса?
Тапса сиктĕр маттур çÿрен ут,
Пăхса юлтăр, ан тив, çиче ют.
Камăн çулĕ пие хирĕç мар —
Ларкăча тус-йышла сиксе лар!
Савнăç, савнăç! Чупту, ытала!..
Ямшăк тус, хулленрех хăвала...
Киленсе куç хупса иличчен
Ялăм юлнă таçта çитиччен.
Юр ÿкет – и лапка та лапка...
Пурнăç, пурнăç, ытла ан васка!
Çамрăк ĕмĕр – самант.
Уй парни –

Пачах-ха, вăл чăваш-чăваш сасăпа
чăвласа тăракан хĕç пекех çип-çивĕч.
Хашĕ-пĕрисем ăнланаймаççĕ çав сана, тăван
чĕлхемĕр, пач та ăнланмаççĕ.
Анланма тивĕçлĕскерсемех.
Чухламалла тенĕскерсемех.
Тавçăрмалла пекскерсемех.
Анланăвĕ вара хăйсен, тивĕçле ăнланăвĕ,
çаплах çук та çук,
çав-çавах çук.
Чĕлхе!..
Чи пысăк мул вăл çакă çутă тенчере, чи
captured:
аслă пуянлăх.
Унран пысăккине, унран măннине урăх
нимĕскер те, пĕр
нимĕскер те шыраса тупаймăн.
Ниçта та.
Нихăçан та.
Чи хаклă парне вăл кирек камшăн та, чи
вăйла пил-ĕмĕт!
Ăстан, питех те ăстан ăслăланă çав ĕнтĕ
халăхăмăр чĕлхемĕре,
калама çук аслăн ăсталанă.
çав териех меллĕн те çав териех шеппĕн!
Йĕрки-йĕркипе шайлаштара-шайлаштара
хурса та майĕ-майĕпелен
вырнаçтара-вырнаçтара пырса.
Теплĕн те килĕшӳллĕн сыпăнтарса,
çыхăнтарса.
Кашни-пĕр сăмахнех чалтăр вут сирпĕнсе
тухаслах туптаса.
якатса!

*Назул, А. Тăван çĕршыв, тăван чĕлхе // Ялав . – 1994. - № 6. – С. 29.*

Çут шăнкравлă кĕç-вĕç çăварни.

*Митта, В. «Тăван чĕлхем! Таса хĕлхем…» // Митта В. Кĕрхи илем / В. Митта. – Шупашкар, 1978. – С. 108-110.*

| Оглавление |

---

## Петров-Вирьял Ю. Чăваш чĕлхи

*Чăваш чĕлхи*
*Тăван чĕлхене*
*аталантарассишĕн*
*чунтан тăрăшакан Андрей Алексеева*

Çулçӳрен çеç çакна пĕлме пултарĕ:
Эс инçетре, хальччен пулман çĕрте,
Хăш чух хăвна туйса илен мăнтарăн –
Самантлăх пăлхану ку пулĕ, тен?
Çав вăхăтра тăван сасса илтен-тĕк
Хĕвĕшекен çынсен шăв-шавĕнче,
Пачах манатăн ĕшенли çинчен те,
Юлмасть салхулăх та чун тĕпĕнче.
Вара тĕлĕнмелле хавхаланулăх
Çӳле çĕклет сан шухăш-ĕмĕтне.
Çут шыв та, вĕççĕр хир те симĕс улăх
Пуплеççĕ, пехилленĕ пек анне.
Чĕлхем! Санра çĕр кĕввине илтетĕп,
Куратăп йăлтăр çиçĕм çиçнине...
Е вутлă тăвăла асилтеретен,
Е ытарми сăпка юррисене!
Манми сăнарлăн, чĕррĕн кăларатăн
Çĕнелекен тавралăха ума:

## Сандров Н. Тăван чĕлхе

*Тăван чĕлхе*
*Тăван чĕлхем ыран пĕтес пулсассăн,*
*Эп хатĕр паянах çĕре кĕме.*
*Р. Гамзатов*

Вĕç-хĕррисĕр
Раççей çĕрĕнче
Миçе пин юханшыв юхать-ши?
Шăнкăр-шăнкăр шывсем хушшиниче
Чи илемлĕ сасли хăшĕ-ши?
Хăшĕ-ши? Кам пĕлет-ши çакна?
Кашни халăхăн хăйĕн чĕлхи.
Вăл илет те пĕрре тыткăна,
Çак вара – чи ырри, лайăххи.
Малтанхи «аннерен», «аттерен»
Тин çеç илтнĕ «нейтрино» таран
Пĕтĕмпех эс тирпейлĕн илен,
Хăв сăмах хутаçне пуçтаран.
Çав хутаç ылтăнран та паха,
Мухтанатпăр эпир унпалан.
Тав тăватпăр тăван халăха
Çав хутаç кăтартмалăх пуртан.
Эй, чĕлхемçĕм, сана юратса

Мăн тинĕсе куçса юрлать халь Атăл,
Ăш çумăр курăк кашмине кумать.
Хум шăпăл-шăпăл!..Çулçă çăтăл-çăтăл
Çил вăштăр-вăштăр!.. Канлĕ хăлхана.
Чечек шăрши те, пыл тути те тăтăш
Кăтăкласа тăраççĕ сăмсана.
Туй тутăрĕ тĕртет чечеклĕ йăлăм,
Чĕнет тăван пек ăшшăн Шупашкар...
Хам халăхпа нихçан та пулмăп тăлăх,
Кирек мĕнле ĕçре те халсăр мар!
Чăваш эп! Хÿхĕм калаçма пултарăп
Туспа та, савиипе те тăшманпа.
Чĕлхемĕр уçлăхра та ян! янрарĕ
Вут-кайăкла вĕçсе Андриянпа.
Хĕç евĕр çивĕч,
Çиçĕм пек кăварлă,
Çут кĕмĕл саслă, витĕмлĕ чĕлхем!
Эс манăн ĕçĕмри сÿнми хастарлăх,
Юратупа кĕрешÿри илем!

*Петров-Вирьял, Ю. Чăваш чĕлхи // Петров-Вирьял, Ю. Ырми-канми çăлкуç / Ю. Петров-Вирьял. – Шупашкар, 1986. – С. 41-42.*

Çак сăвва эп çыратăп чунтан
Ирхи сывлăм пек эсĕ таса,
Эс хрусталь чечек пек янăран.
...Кĕмĕл саслă çинçе хĕлĕхе
Чĕтрентерчĕ-им лĕп çил килсе?
Çук, ку çепĕççĕн пирĕн чĕлхе
Янăрать эфирта чÿхенсе.
Çиçĕм çиçрĕ йăлт-ялт, аслати
Шартлаттарчĕ таçта çывăхрах.
Чипер чух аслати пулать-и –
Шартлаттарчĕ ку пирĕн сăмах!
Эй, чĕлхем, анне панă чĕлхем,
Янăра эсĕ çут тĕнчере.
Ыттине çĕр чĕлхе эп пĕлем,
Эсĕ манăн – пĕрре çеç, пĕрре!
1969—79

*Сандров, Н. Тăван чĕлхе // Сандров Н. Сăвăсемпе поэмăсем / Н. Сандров. – Шупашкар, 1981. – С. 17-18.*

| Оглавление |

---

## Сементер Ю. Чăваш чĕлхине сăвапласа кĕвĕленĕ кĕлĕ

Эй, аслă чĕлхемçĕм,

чун-чĕрери хĕлхемçĕм!

Çакă сенкер тĕнчери

кун çутине астăван малтанхи самантранах

сан сипетлĕ ăшшуна кăкăрăмра упратăп,

çав ăшăпа пурнатăп.

Йĕлме йывăç пĕкечи

ярăм-ярăм ярăнса сиктеретчĕ сăпкама,

çут тĕнче ăшпиллĕхне ачисемшĕн пухнă чун,

хĕвел кăмăллă аннем,

калаçатчĕ манпала.

Çăлкуççем шăйкăртатни, çăлтăрсем йăлтăртатни,

чĕкеççем чĕвĕлтетни, кĕпшĕлсем кĕвĕлтетни

пурччĕ унăн сассинче, унăн çепĕç юрринче.

Аттесен сăмахĕнчен сĕм вăрман каш кашлани,

ырашсем шăркаланни, çын ĕçпе патварланни,

тăшмана парăнманни сăрхăнатчс хăлхана.

Çÿтçанталăк куçăмне, хамăн пурнăç шуçăмне

эп кăларнă куç умне эс кÿрен пархатарпа,

аттепе анне чĕлхи, ытарми чăваш чĕлхи.

Сан таса пехилӳпе хам ёҫӗме тӑватӑп,

сан таса пехилӳпе алла ҫӑкӑр тытатӑп,

сан таса пехилӳпе ҫынпа сапӑр пулатӑп,

эс кӳрен тивлетпелен — вырӑсра та вырӑн пур,

эс кӳрен тивлетпелен — тутарта та туссем пур,

эс кӳрен тивлетпелен — ҫармӑсра та ярмӑҫ пур.

Эй, аслӑ чӗлхемӗр, пире усран ырсемӗр!

Сан ятна сӑвапласа, ырлӑхушӑн тав туса

пуҫа таяс кӑмӑл пур, чунтан калас сӑмах пур.

Ҫав кӑмӑла палӑртма ҫав мехеллӗ сехет пар,

ҫав сӑмаха калама ҫав мехеллӗ хевте пар.

II

Пурнӑҫ чӗрӗлӗхӗпе пӗтӗленнӗ ҫӗр ҫине

ҫын килет тахҫан авал.

Йӗкелрен вӑрман шӑтать, хунавран вӑрман хунать.

Ар сывлӑшӗ пур чухне, ама сывлӑш пур ҫӗрте,

ҫын йышӗ те хутшӑнать,

чун ҫумне чун хушӑнса,

хӑйне ята йӑх юлать.

Йӑх катинче пуплеме, пӗр-пӗринпе хутшӑнма,

ниме пухса ӗҫ тума, уяв туса савӑнма

халӑхӑн чӗлхе пулать.

Аслӑ несӗлсен чӗлхи, аттепе анне чӗлхи!

Ҫӗр ҫинчи пин-пин чӗлхен

пин туратлӑ йывӑҫҫин авалхи тымарӗнчен

хунавланса килекен чӑтӑм-тӳсӗмлӗ чӗлхем!

Вӗҫсӗр вӑрман кашлани, Катунь-шывӗ шавлани,

Тенгиз кӳлли хумханни, Урал шухӑша кайни,

Каспи хумӗ каҫ пулсан улӑпсемпе калаҫни,

Кавказ тӑвӗ кар тӑни —

пурте пур сан кӗввӳнте,

пурте пур сан ҫеммӳнте.

Пушӑ выртан хирсенче кӑпчак вӑрттӑн ҫӳрени,

Кӑбрат хан Аспаруха вут умӗнче пиллени,

Ахмед Ибн-Фадланпа Алмăш алă çапнисем,
Киев кнеçĕ Улатимĕр, Сарă Хĕвел тенĕскер,
пирĕн пăлхар элтепĕрне пуç тайса чысланисем,
Кушкăри Якку Иăванĕ
çук çын ачи пуçĕпех
пысăк пĕлӳ туянса,
еçĕ çумне ĕç хушса, чысе çумне чыс хушса
дворян ятне илнисем,
унтан чăваш халăхне кĕнеке тыттарнисем,—
пурте пур сан кĕввӳнте,
пурте пур сан çеммӳнте.

Çăлтăр витĕр çул курса пушхир урлă каçнăскер,
вĕрене çулçи çутипе вăрман витĕр тухнăскер,
Атăл тăрăх хăпарса,
вăл юпленекен çĕре çитсе
тымар яриччен ӳркенмесĕр утнăскер,
чăваш çынни санпала, ытарайми чĕлхемĕр,
хăйĕн йышне усранă,
синкер килнĕ сехетре юман пулса юрлана,
Вирт çӳрекен вăхăта йăмра пулса йăпатнă,
тӳлек тăран каçсенче саркайăк пек сас панă,
имлĕхне те сиплĕхне, ĕмĕрхи техĕмлĕхне,
ĕмĕрхи çепĕçлехне, тараватвашаватне,
иксĕлми пархатарне уртмахĕнче упранă.

Тайма пуç сана, чĕлхем,
чунăмри таса хĕлхем!

III

Тĕнчене килен этем сар хĕвеле чыс тăвать.
Сар хĕвеле чыс тăвать, хура çĕре пуç таять.
Çăкăр çиес теекен, тутă пулас теекен
çĕр чĕлхине вĕренет,
çĕр чĕлхине вĕренсе, çĕр пулăхне ӳстерет.

Вăрлăх шăттăр теекен, тырă ăнтăр теекен
шыв чӗлхи те вӗренет,
шыв чӗлхине вӗренсе, уя нӳрӗк витерет,
ял ҫуммипе юхакан шанкăр-шăнкăр шывсене,
ҫавра куҫлă ҫăлсене ҫыншăн тăрăшма хистет.
Вут уссине пӗлекен,
ун вăййӗпе ун халне ӗҫе кӳлес теекен
вут чӗлхи те вӗренет,
вут чӗлхине вӗренсе, ҫӗршер лаша вăййӗпе,
пиншер лаша вăййӗпе тӗрлӗ хăват меслетлет,
ӗҫ тухăҫне пехетлет.
Ҫутҫанталăк аллинче ҫитмӗл вăй та ҫичӗ вăй,
пайăр вăя пай пама, вунă пая пӗр тума,
пурнăҫ майлă ҫавăрма,
чӗлхемӗрӗн майӗ пур, чӗлхемӗрӗн сайӗ пур,
пит пӗлесех тесессӗн, вӗренесех килсессӗн
таса чунлă этеме пыл пек пылак тутине,
ҫу пек ҫемҫе ыррине, тухатуллă хăватне,
вăштăр-вăштăр ҫунатне, ҫураҫуллă кăмăлне
тата ытти асамне парнелет чăваш чӗлхи,
ăс чӗлхи те хал ҫилхи.

Сан сулăмупа, чӗлхемӗр,
сăвай ларать лайăххрах,
никӗс чăтать ытларах, пӳрт хăпарать хăвăртрах,
сан пехетӳпе, чӗлхемӗр, кӗреке илпеклӗрех,
туй юрри илемлӗрех, туй ташши хӗлхемлӗрех,
сан хисепӳпе, чӗлхемӗр,
атте-анне сумлăрах, тăван-пӗтен чыслăрах,
пӗлӗш-хурăнташ хаклăрах.
Мерттес санăн кăмăлна!
Мерттес санăн ҫавруна!

IV

Улăх-ҫаран тени тӗрлӗ чечекпе пуян,

вăрман тени тĕрлĕ йывăçпа пуян.

Пĕрлĕхенпе пыл курăкĕ валли те,

юманпа çăка валли те, ăвăспа шĕшкĕ валли те

вырăн çителĕклĕ унта.

Хĕвел кĕлчечекпе утмăлтурата та,

çĕмĕртпе шăлана та пĕр пекех сават.

Кашни йывăç-курăкăн хăйне кура сиплĕхĕ,

хăйне кура имлĕхĕ.

Çавăнпа кирлĕ те,

çавăнпа хаклă та вĕсем пирĕншĕн.

Пĕтĕм курăк хушшинче пĕтнĕк пĕтес пулсассăн,

пĕтĕм йывăç хушшинчен йăмра-çӳçе çĕтсессĕн,

сывлăш техĕмĕ чакать, пурнăç техĕмĕ хухать.

Пирĕн чăваш чĕлхи те пин-пин чĕлхе хушшинче

çавăн пекех ыр ятлă, çавăн пекех сăваплă.

Çутçанталăк сассинчен чĕлхе пулнă кунтанпах,

чăваш тенĕ халăха пĕрле çыхнă кунтанпах

эсĕ, аслă чĕлхемĕр, пире ырлăх пиллетĕн,

пире усă кӳретĕн.

Çут тĕнчене киле тăран

сан тивлетӳпе курать амăшĕи ачашлăхне,

ĕç нимине тухакан

сан тивлетӳпе курать пĕрлехи вăй уссине,

тăван-пĕтен пухăнса кĕрекене ларсассăн

сан тивлетӳпе курать пурăнăç милетлĕхне.

Сармантей чĕлхиçĕмĕр,

пин те пин чĕлхе çинче эс хăвна мала хуман,

пин те пин чĕлхе çинче ыттинчеи кая юлман.

Тĕнчепе пĕр шай тăма пур сан хĕвел-сăмахху,

халăх чунне кăтартма пур сан асам юмахху,

пур сан сурпан-масмаку, пур сан юрру-такмаку,

хăна-вĕрле йышăнма — пур сан чĕнтĕрлĕ хапху.

Ивановпа Çеçпĕлӳ, Шелепипе Элкерӳ,

Хусанкайпа Ухсаю, Миттапала Янкасу —

сан яту та сан чысу!

Пурӑн, шӑкӑлчи чӗлхемӗр!

Пурӑн, шӑнкӑрти чӗлхемӗр!

Утакан ҫын умӗнче утма ҫулне уҫса пыр,

ырӑ ҫыннӑн чунӗнче ырӑ шухӑш хушса пыр,

Юрий Сементер.

пӗчеккине пысӑк ту,

сусӑррине сывӑ ту!

Эй, чӗлхемӗр!

Ылтӑнпа виҫейми таса тупра!

Ҫакӑ ҫутӑ тӗнчере хӑйне чӑваш теекен,

пултӑранпа ыр пулан,

сӑрапала сӑйланан халӑх пӗрлӗхне упра!

V

Ҫитмӗл те ҫичӗ тинӗс утравӗнче ылтӑн вӑрман,

ылтӑн вӑрманта ылтӑн пӳрт,

ылтӑн пӳртре ылтӑн сакай,

ылтӑн сакайӗнче ылтӑн йӑва,

ылтӑн йӑвара ылтӑн ҫӑмарта,

ылтӑн ҫӑмартаран тухнӑ хур чӗпписем

шӑкӑл та шӑкӑл шӑкӑлтатса пурӑннӑ евӗр

ылтӑн сӑмахпа ынатланса,

кӗмӗл кӗвӗпе кӗрнекленсе пурӑнччӑр,

чӗвӗл-чӗвӗл чӗлхемӗр,

сана тӑван шутлакансем,

сана сума сӑвакансем,

сан илемлӗхӳпе сан хӗлхемлӗхне

чун-чӗринче упракансем,

ытарайми чӑваш ҫыннисем.

.

*Сементер, Ю. Чӑваш чӗлхине сӑвапласа кӗвӗленӗ кӗвӗ / Ю. Сементер // Сементер, Ю. Йӗс шӑнкӑрав. - Шупашкар, 1991. - С. 29-34.*

## Сеспель М. Чăваш чĕлхи

*Лбов юлташа хисеплесе*

Тĕнчене тасатрĕ ирĕк вут-кăварĕ,
Çут тĕнче çуталчĕ, иртрĕ авалхи.
Тĕттĕмĕ тĕп пулчĕ,
мăшкăл иртсе кайрĕ –
Тин ирĕке тухрăн, тĕп чăваш чĕлхи!
Миçе ĕмĕр витĕр асаппа тухмарăн,
Миçе çичĕ ютăн мăшкăлĕ пулса...
Çапах паттăр юлтăн, вăйна çухатмарăн,
Халь те пулин çивĕч, кăвартан таса.
Йăвăр асапран та, тимĕр сăнчăртан та
Эсĕ парăнмасăр хăтăлтăн пулсан, –
Пулас пурнăçра та çивĕчпе хăватлăх
Ют чĕлхесенчен те кая пулмĕ сан.
Кăмăллă çĕршывăн кăмăллă чĕлхиçĕм!
Иртнĕ хурлăхушăн çитĕ ырлăху:
Хĕрлĕ хĕрнĕ хурçă, çунтаракан çиçĕм,
Вĕри вутлă çулăм эсĕ пулăн ху.
Аслă Атăл урлă, Атăл шывĕ майĕ,
Вăрман витĕр кайĕ мухтавлă яту;
Кĕсле кĕвви саслă янраттарса кайĕ,
Уйăхăн-хĕвелĕн çунĕ хăвату.
Атăл хумĕсенĕн шавланисене те,
Хăвна та ÿстернĕ ват Шупашкара,
Ирĕкле çĕршывăн ырă ирĕкне те
Юрă хывса мухтăн асăнса вара.
Сана шанаканĕ, çакна çыраканĕ
Çĕр айĕнче выртĕ тăлăххăн ун чух,
Хăй çиййĕнчи çĕрĕ ăна пусса анĕ,
Сан чапна курмашкăн тăма пулас çук.

Ун çинче чăвашăн чĕлхи чапĕ пулĕ,
Тăпри çинче янрĕ ирĕклĕх юрри, –
Вара вилнĕскерĕ канлĕ-канлĕ выртĕ,
Канлĕ, çăмăл пулĕ çиййĕнчи тăпри.

[1920 ç. чÿк]
Шупашкар

*Сеспель, М. Чăваш чĕлхи=Чувашский язык // Сеспель М. Çырнисен пуххи / М. Сеспель. – Шупашкар, 1989. – С. 94-97.*

## Сеспель М. Чувашский язык

*Посвящается товарищу Лбову*

Навсегда очищен пламенем свободы,
Новый день сияет над моей страной.
Скрылась тьма глухая, пронеслись невзгоды,
Наконец ты волен, наш язык родной!
Сколько мук ты в прошлом и страданий вынес!
Кто тебя в столетьях не терзал, гоня!
Но остался твердым, сохранил доныне
Ты железа силу, чистоту огня.
Если ни насильем, ни цепями время
Не смогло навеки в прах тебя стереть,
То и в новой жизни наравне со всеми
Языками мира будешь ты звенеть.
Сладкая для слуха речь родного края!
Прежних унижений нету и следа.
Сталью накаляясь, молнией сверкая,
Пламенем разящим будешь ты всегда.
По широкой Волге, по волнам-бурунам.
По лесам, долинам ты, язык родной,
Зазвенишь, подобно гуслям златострунным.
Заиграешь разом солнцем и луной.
Ты прославишь в песнях край наш
обновленный,
Светлую свободу сердцем возлюбя.
Ты прославишь Волги плеск неугомонный,
Шубашкар, что нежно вынянчил тебя.
Может, не увидит твоего расцвета
Тот, кто с жаркой верой пишет о тебе.
Может, только насыпь, зеленью одета,
Скажет миру где-то о его судьбе.

Но над ним язык наш в славе громкой, новой
Зазвенит в свободных песнях и стихах.
И ему, поэту, от родного слова
Будет легче пуха надмогильный прах.

[Ноябрь 1920]
Чебоксары

*Сеспель, М. Чăваш чĕлхи=Чувашский язык // Сеспель М. Çырнисен пуххи / М. Сеспель. – Шупашкар, 1989. – С. 94-97.*

| Оглавление |

## Тимбай А. Тăван чĕлхе

Тăван чĕлхе
Тăван чĕлхе, эс тăванран тăван.
Санран та çывăххи мĕн пур-ши ман?
Анне ăсанчĕ урăх тĕнчене –
Хăй чĕлхине хăварчĕ ачине.
Тăван чĕлхеçĕм, юлтăн манпалан,
Куç хупиччен эс чĕрере ялан.
Туссем те пулмĕç ĕмĕр юнашар.
Ыр тăвансем те ĕмĕр-ĕмĕр мар –
Пĕр эс анчах, чĕлхемĕр, ĕмĕре,

## Титова О.Чăваш чĕлхи

Чăваш чĕлхи – тăван чĕлхе,
Эс чи пахи, эс – чун уççи.
Тăван чĕлхе – ĕмĕрлĕхе,
Пин чĕлхерен чи çепĕççи.
Çак чĕлхепе эп калаçатăп,
Куллен çыратăп та вулатăп,
Çак чĕлхепе эп мухтанатăп,
Куллен-кунах ăса туптатăп.
Тăван чĕлхе, тăван сăмах,
Сана упратăп чĕремрех.

Нихҫан та эс пăрахас ҫук пире,
Тăр кăнтăрла та е хура ҫĕрле
Тата Тăван ҫĕршыв санпа пĕрле.
Эс чĕрери нихҫан сӳнми хĕлхем,
Янравлă та хитре тăван чĕлхем.
Чăваш чĕлхи, эс иксĕлми пуян,
Сан анлăшу – хăватлă океан.

*Тимбай, А. Тăван чĕлхе / Тимбай А. // Тăван Атăл. – 1985. - № 1. – С. 43.*

Мана вăй кӳрен яланах,
Тăван чĕлхе – ĕмĕрлĕхех!

*Титова, О.Чăваш чĕлхи / О. Титова // Ялав. – 1997. - № 9. – С. 120.*

| Оглавление |

---

## Ухсай Я. Чăваш чĕлхи

Тĕтреллĕ Висла леш енче ҫӳреп-и,
Кĕретĕп-и Карпат ту-чакăлне,
Ăҫта кайсассăн та, илтетĕп эпĕ
Тăван чĕлхемĕн тунсăх сассине.
Туссем калаҫнă чух, тăван чĕлхемĕм,
Шур акăш тĕкĕ евєр эс ҫемҫе.
Санпа ман халăх чунĕ те илемĕ
Ҫӳрет ҫӳлте те ҫĕр ҫинче вĕҫсе.
Юрланă чух сассу хитре те уҫă:
Итлет вăрман та, хир те янраса.
Чулсем ҫинчи канми-тăми ҫăлкуҫĕ
Юхса йăпаннă пек сассу таса.
Екки ярса ачашшăн калаҫмалăх
Ҫулла ҫап-ҫутă уйăх шевлинчен
Туса сана шăратнă манăн халăх,
Сана шăварнă шăпчăк юрринче.
Анчах та халăхăн ҫилли хаяррăн
Чĕре тулли йӳҫсе тапса тухсан,
Чăваш чĕлхи, чєлхемĕм, шĕл-кăваррăн
Ҫунать вăю та сан, юрру та сан.
Сана хăрушă кунсенче касмалăх,
Йыхравлăн кĕрлеме кĕрешӳре
Хĕвелĕн ҫутипе туптанă халăх,
Сана савса шăратнă ҫиҫĕмре.
Сана йăваш теме кам хăюлланĕ,
Сана кам хурлĕ халĕ ҫĕр ҫинче, –
Итлерĕм эпĕ, гварди капитанĕ,
Сана вутри Воронеж хирĕнче.
Ҫулла – тусан, хĕлле – юр юнла, тарăн,
Ялсем те хуласем ҫинче хĕлхем.
Танкра та нӳрлĕ окопра тăнларăм
Тĕреклĕ сассуна, тăван чĕлхем!
Орел та Прага, Киев та Варшава,
Белград та, Будапешт та, Порт-Артур.
Татти-сыпписĕр пычĕ вăрҫă шавĕ.
Унта чăваш чĕлхин те пайĕ пур.
Тăван чĕлхемĕмҫĕм, тăванлă эсĕ
Пуян та ҫирĕп вырăс чĕлхипе.
Инкек те терт, асап та хур пĕлмесĕр
Янра та савăн аслă пиччӳпе!
Тăшман тесен – ҫиллен, кĕрле кĕр те кĕр,
Туссем тесен – саркайăкла ян-ян.
Хитре сассу та шухăшу ĕрчетĕр,
Кĕрхи уйри йĕтем пек пул пуян!
Сана паян тиркевлĕ хурлаканĕ
ăҫта кам пулĕ пысăк ҫĕр ҫинче, –
Мухтатăп эпĕ, гварди капитанĕ,
Сана хĕвел те уйăх умĕнче.

## Туркай В. Чăваш чĕлхи

*Г. Н. Волкова*

Чăваш чĕлхи –
пĕрремĕш ĕсĕклевĕм,
суранлă чунăмăн
чи юлашки ҫĕвви –
ăстăнăм вучахне чĕртсе,
пехил парса,
мана чĕрҫӳ ҫинче ӳстертĕн.
Чăваш чĕлхи –
вĕри чĕре таппи –
хĕҫ-сăнăсем хĕресленсе
хĕмленнĕ кунсенче
таса юнпа хĕрелнĕ,
сив сăнчăрне татса,
ҫуратнă ҫĕн сăмах.
Чăваш чĕлхи –
ту пек тулли арча –
сан иксĕлми тупру
пурин валли те ҫитнĕ,
ҫитĕ те.
Кунран-кун – хаклăрах,
кунран-кун – аслăрах.
Пурнар, чĕлхем,
тăван чĕлхем, пурнар.

*Туркай, В. Чăваш чĕлхи // Туркай В. Ҫăлкуҫ сути / В. Туркай. – Шупашкар, 1989. – С. 19.*

1945

*Ухсай, Я. Чăваш чĕлхи // Ухсай Я. Хура тăпра: суйласа илнисем / Я. Ухсай. – Шупашкар, 1971. –Т. 1. - С. 250-252.*

| Оглавление |

---

## Хусанкай П. Тăван чĕлхе

Эп, радиопа атом ĕмĕрне те
Çитсе кĕмешкĕн ĕлкĕрнĕ этем,
Чĕлхе тăванлăхне курасчĕ тетĕп:
Пĕрне-пĕри ăнланччăр халăхсем.
Философăн, поэтăн е çулпуçăн
Сăмахĕ çиттĕр пур илемĕпе,
Пур вăйĕпе çиçсе вылятăр уççăн –
Хĕвел пек, çил пек, çумăр пек, – теп эп.
Çапах та – халлĕхе мĕн паллаштарчĕ
Мана çак ешĕл курăкпа, çĕрпе?
Çак пĕлĕт çуллĕшне мĕн ăнлантарчĕ? –
Тăван чĕлхе! Çав пулчĕ тĕкĕр пек.
Килте, ютра-и эп – кирек ăçта та,
Кирек хăçан та тав тăвап ăна:
Чĕлхем! Санпа тĕнче уçси тытатăп,
Шухăшлама вĕрентрĕн эс мана.
1951

## Хузангай П. Родной язык

В век радио и атомных открытий
Хотел бы я дожить до дней, когда
И языков связующие нити
Сплотят в одну семью людей труда.
Хотел бы я, чтоб речи доходили
Мыслителей, поэтов и вождей
В их первозданной красоте и силе,
Как свет лучей, шум ветра и дождей.
А что меня с землей, с травой зеленой,
С высоким небом, с клекотом орла
Знакомило, баюкая, с пеленок? –
Родная речь наставницей была.
Всегда, везде – в кругу привычном дома
Иль далеко от наших рубежей –
Я благодарен языку родному:
Он мне открыл мир мыслей и вещей.
1951

*Хусанкай, П. Тăван чĕлхе=Родной язык // Хусанкай, П.П. Эпир пулнă, пур, пулатпăр! = Были мы, и есть, и будем / П.П. Хусанкай. – Шупашкар, 1982. – С. 242-243.*

| Оглавление |

---

## Федорова Л. Тăван чĕлхем

Шăнкар-шăнкар шыв юххи, –

Чĕвĕлти чăваш чĕлхи.

Чунăмра – тăван хĕлхем,

Сăмахра пурах илем.

Кăмăллан пуплет анне,

Калаçать япшар атте.

Тĕп чăваш – ман асатте,

Чăвашсем – аппа, тете.

Чĕлхеме саватăп эп.

Çепĕç вал, янравлă, шеп.

Сывă пул тăван чĕлхем,

Чунăма çĕкле, хĕлхем!

*Федорова, Л. Тăван чĕлхем : [сăвă] / Л. Федорова // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2015. – [Т. 4] : Ача-пăча валли сырнă хайлавсем. – С. 401.*

|Оглавление|

## Чичканов П. Тăван чĕлхе

Аташăм Петĕр! Ялан çĕклетĕр
Чăваш чĕлхи вăй-хăватна.
*П. Хусанкай*

Тăван чĕлхем, сана саватăп,
Чи илемли эс тĕнчере,
Пин çухрăмри Канашăма та
Сан хевтупе туять чĕрем.
Ăçта кăна илсе тухмарĕ
Шăпам пас тытнă пуçăма,
Мĕнле чĕлхе-тĕр лăпкамарĕ
Кăмăлăма та хăлхама?
Анчах сана пĕрех манмастăп:
Эс – чєрĕ вăй, эс – ман тĕрек,
Çил авăсса пыран çунатăм,
Кил умĕнчи лаштра тирек.
Пин сасă хушшинче эс маншăн –
Чи çепĕççи те чи ырри,
Санра пурнать атте канашĕ,
Анне юрлан сăпка юрри.
Ача чухнех тухса эп кайнă
Ялйыш, пускил ытамĕнчен,
Чĕлхеçĕм, тăванран тăванăм,
Çавах эс чунăм варринче.
Çынпа пуплев тупан уртмахăм
Çитерчĕ Кейĕв хулине.
Асран тухми тăван сăмахăм
Сапса тăрать хăй хĕлхемне.
Бомбей 1971

*Чичканов, П. Тăван чĕлхе / П. Чичканов // Ялав. – 1994. - № 7. – С. 29.*

## Эндип В. «Тăван чĕлхе, эс – вĕçĕмсĕр тĕнче...»

Тăван чĕлхе, эс – вĕçĕмсĕр тĕнче:
Мĕн чухлĕ çăлтăр санăн тӳпӳнте!
Сӳнми сăмахлă çăлтăр пуххинче:
Тăван çĕршыв, Анне, çĕр – чи çӳлте.
Тав ĕмĕре – вăл сутрĕ тӳпемре
Вĕр-çĕнĕ çăлтăр – сивĕнми сăмах.
Ун ăшă çутинче кӳтмест чĕре,
Малтан мала та пăхтарать вăлах.

*Эндип, В. «Тăван чĕлхе, эс – вĕçĕмсĕр тĕнче...» // Эндип, В. Самана / В. Эндип. – Шупашкар, 1987. – С. 17.*

| Оглавление |

---

## Юман А. Тăван чĕлхе

Тăван чĕлхе! Ĕмĕрлĕхе эс пурăн,
Атте-анне пек, эс пĕртен-пĕрре.
Ман саншăн хатĕр чи хисеплĕ вырăн,
Мухтав сана, тăван чĕлхемĕре!
Ĕлĕк-авал ухмах пуçсем тиркенĕ,
Вăтаннă тĕнчене санпа тухма.
Чăваш кĕнекине «ĕне кавленĕ»,
Юрру хуп хушшинчен инçе юхман.
Ху халăхна эс сывлăш пекех кирлĕ.
Патша тарçи-тĕрçи сана хăртсан,
Çĕкленнĕ Яковлев, каланă вирлĕн
Вăйна та, асамна та палăртса.
Тусĕсемпе ырмасăр хатĕрленĕ
Сана валли кĕпе. Ку – саспалли.
Хурсассăн сăпкана савса сиктернĕ
Талантлă Иванов поэт алли.

## Ялгир П. Чăвашсем, чăмăртанăр!

Пирĕн ват несĕлсем
Курнă çут Байкала.
Чăваш сасă пани
Икĕ пин çул ытла.
Ваттисен ячĕпе,
Чăвашсем, чăмăртанăр!
Пĕр пулса пуринпе
Пирĕн чап та янратăр.
Чăвашсем, чăвашсем,
Чăвашсем, чăмăртанăр!
Пирĕн шурсухала
Мăн Эльбрус астăвать.
Килĕштернĕ çынсем
Кавказри çĕр-шыва.
Атăлçи Пăлхарта
Ӳснĕ пирĕн ратне.

Чĕлхе вăл – халăхăн асамĕпе илем
Ун савнăçĕ, хевти, хуйхи-суйхи.
Чĕлхе сыв чух этем юта кĕленмĕ,
Унпа пĕрле чух кăмăлăм – çурхи.
Чăваш чĕлхи! Сана юп курнă, шаннă,
Куç пек упранă халăх чи малтан.
Кăвар чĕреллĕ Çеçпĕл сасă панă,
Пуласлăхна вăл картнă кăмăлтан.
Чăваш ачи çырнисене вуларĕç
Тутар та вырăс, калмăк та ирçе.
Юта тухма та виза илтĕн мар-и –
Эс каçрăн океан урлах, инçе.
Шупашкартан Кавал таран кăна-и, –
Сассу çĕкленчĕ халĕ космоса.
Планетипех илтсе сана сăнарĕç –
Çăлкуçĕ пек эс, иксĕлми, таса.
Эс йывăра тÿссе çÿле çĕклентĕн,
Эс çитрĕн терĕмĕр чечекленсе.
Эс кирлĕ мар-и тек? Çитет-и ĕнтĕ?
Каяс-и çакăн хыççăн халь тÿнсе?
Хутна кĕрсе сана вăй параканĕ
Вăл пулчĕ вырăс халăхĕн чĕлхи.
Ыр тунине чăн-чăн чăваш-и манĕ?
Чăвашăн çав чĕлхе те – чун пахи.
Чăваш сывлать. Çăра ун юнĕ. Халăх
Сывах чухне пĕтместĕн эс, чĕлхе.
Вăю çаплах металл касса татмалăх,
Самантлăха килмен – ĕмĕрлĕхе.
Совет килйышĕнче эс танлă, ятлă,
Çук, таврăнмĕ нихçан та авалхи.
Эппин, янра, чăваш чĕлхи хăватлăн,
Ĕçчен те çепĕç халăхăн чĕлхи!
1972

*Юман, А. Тăван чĕлхе / А. Юман // Львов, П. К. Ç ĕр çаврăнать. Чĕре çĕввисем. Тăвать кустăрма: сăвăсемпе поэмăсем. – Шупашкар, 1992. – 172-173.*

Çитнĕ унăн элчи
Киев Руçĕ патне.
Парăнман несĕлсем
Тутар ханĕсене,
Вырăспа пĕрлешсе
Уçнă ÿсĕм çулне.
Ырлăх çулĕпе халь
Йыш утать маллала.
Хытăрах янратар
Юрăсем чăвашла.

*Ялгир, П. Чăвашсем, чăмăртанăр! / Ялгир // Львов, П. К. Çĕр çаврăнать. Чĕре çĕввисем. Тăвать кустăрма: сăвăсемпе*